Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

40 (8204) № * Шăмат кун, 2014 çулхи çу (май) уйăхĕн 31-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Иван Моторин лагерьте пулчĕ



"Пĕтĕмĕшле илсен республикăри лагерьсем ачасене йышăнма хатĕр", – терĕ Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин пирĕн районта вырнаçнă "Солнышко" ачасен сывлăхне çирĕплетмелли лагерьте пулнă май. Ĕнер вăл шăпах пирĕн районти çак лагерь ачасен çуллахи канăвне ирттерме епле хатĕрленнипе кăсăкланчĕ. Иван Борисовича, çавăн пекех Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн председателĕн çумне – республикăн Сывлăх сыхлавĕ тата социаллă аталану министрне Алла Самойловăна, вĕренӳ тата çамрăксен политикин министрĕн çумне Сергей Кудряшова, Чăваш Республикинчи Роспотребнадзор Управленийĕн ертӳçине Надежда Луговскаяна, гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн тата ытти ведомствăсен представителĕсене лагерьте район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев, "Солнышко" лагерĕн учредителĕ Владимир Ермолаев тата лагерь пуçлăхĕ Сергей Курмышев кĕтсе илчĕç.

Лагерьте ачасене кĕтни куç кĕретех. Территоринчи çула тикĕслесе юсанă. Çĕнĕ спорт площадки туса хунă. Столовăйĕнче те юсав ĕçĕсем хыççăн çĕнĕ сĕтел-пукан кӳрсе килнĕ. Кунта ĕçлекенсем ачасене йышăнас умĕн юлашки ĕçсене туса ирттереççĕ, пур çĕрте те юлашки тирпей-илем ĕçĕсене тăваççĕ. Сумлă делегаци çавăн пекех ачасем пурăнмалли, сипленмелли корпуссенче, вĕсенчи пӳлĕмсенче пулса курчĕç. Çуллахи эстрада, ташламалли вырăнсем те пурин кăмăлне те тивĕçтереççĕ.

Иван Борисович специалистсем çитнипе-çитменнипе те кăсăкланчĕ. Лагерь пуçлăхĕ каланă тăрăх, ку енĕпе ыйтăва йăлтах татса панă.

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин, çавăн пекех ытти хăнасем те "Солнышко" лагерьте курнипе кăмăллă юлчĕç.

Апла пулсан ыран "Солнышко" лагерь 330 ачана тулли кăмăлпа кĕтсе илĕ. Шăпах çавăн чухлĕ ача канмалла кунта пĕрремĕш сменăра.

**Л. ПАВЛОВА.**

## Тимлĕх кăна ытларах уйăрмалла

Ыран – Пĕтĕм тĕнчери ачасене хӳтĕлемелли кун. Çак уява халалласа районти кашни ял тăрăхĕнче уяв мероприятийĕсем ирттерме палăртнă. Район шайĕнчисем вара иртнĕ кунсенчех пуçланчĕç.

Эсир куракан сăн ӳкерчĕке "Пĕтĕмпех çемье ячĕпе" район форумĕнче тума май килчĕ. Çак форума хутшăннисем – хĕрарăмсен районти тата ашшĕсен районти канашĕсен членĕсем, ял тăрăхĕсенчи активлă çемьесем Муркашри ача-пăча тĕп библиотекине пухăнса çемьери хутшăнусем пирки калаçса тĕрлĕ лару-тăрăва сӳтсе яврĕç.

Хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи – район администрацийĕн йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ Л. Тарасова, çул çитменнисемпе ĕçлекен тата вĕсен прависене хӳтĕлекен районти комиссин ĕçне йĕркелекен сектор ертӳçи Л. Петрова ачасене тĕрĕс çул суйлама пĕчĕкренех вĕрентмелли çинче чарăнса тăчĕç. Унсăр вĕсемпе шăпах асăннă комисси ларăвĕсенче тĕл пулма тивет. Çак ларусенчех хăш-пĕр ачана ашшĕ-амăшĕнчен хӳтĕлемелли те çиеле тухать.

Ачана тĕрĕс çулпа утма унăн пултарулăхне аталантарни тата ача кĕнекепе туслă пулни пулăшать тесе форумра пĕр çын кăна каламарĕ. Библиотека ертӳçи Е. Налимова çакна В. Осеева çырнă "Бабка" калава вуласа парса та çирĕплетрĕ. Сăмах май библиотекăра ачасене сиен кӳрекен информацирен те хăтараççĕ. Килте çакна пур чухне ашшĕ-амăшĕ те тĕрĕслесе çитереймест.



Пултарулăх пирки калас пулсан вара çуллахи вăхăтра ачасем аслисемпе пĕрле пластик савăтсенчен тĕрлĕ япала, хатĕр ăсталаса кил картишне е пахчана çăмăллăнах илемлетме пултараççĕ. Форума хутшăннисем ку ĕçĕн вăрттăнлăхĕсемпе те паллаштарчĕç. Муркашри тури чăвашсен музейĕнчи алăпа тунă илемлĕ экспонатсемпе паллашнă хыççăн вара "пылаклă чечек" парне те ăсталама вĕренчĕç.

Ачасен пурнăçне интереслĕрех тума майсем те, условисем те çителĕклĕ, вĕсене тимлĕх кăна ытларах уйăрмалла.

**Н. ДИМИТРИЕВА.**

### Ыран – Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун

**ХАКЛĂ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!**

Сире Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун ячĕпе саламлатăп.

Ачалăх – пурнăçри чи илемлĕ те çутă, савăнăçпа тата телейпе тулли, çĕнĕлĕхсемпе пуян тапхăр.

Патшалăх, общество тата çемье тĕллевĕ – кашни ача хăйне юратнине, уншăн тăрăшнине туллин туйса тăтăр, мĕн пур ачах сывă та телейлĕ ӳссе çитĕнтĕр, лайăх паллă илтĕр, ăс-хакăлпа кăмăл-сипет хаклăхĕсене ăша хывса ӳстĕр тесе мĕн кирлине пурне те тăвасси.

Республикăра шкулчченхи тата шкул вĕренĕвĕн тытăмĕсене çĕнетес ĕç хастарлăн пурнăçланать. Юлашки виçĕ çулта 23 ача сачĕ тунă тата юсаса çĕнетнĕ, çапла майпа пĕтĕмпе 13,9 пине яхăн вырăн йĕркеленĕ, çав шутра çĕнĕрен туса тата юсаса çĕнетсе – 4,2 пин ытла вырăн. Асăннă тĕллевсем валли 2 миллиард тенкĕ ытла янă.

2014 çулта ача сачĕсем тума 1 миллиард ытла укçа-тенкĕ уйăрнă, çавна май 3,7 пин вырăн йĕркеленет.

Иртнĕ тăватă çулта пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан 8 çĕнĕ шкул хута кайнă, республикăри шкулсен 70 процентчĕ юсав ĕçĕсем туса ирттернĕ. Вĕренӳ заведенийĕсене хальхи йышши вĕренӳ, вĕренӳпе лаборатори хатĕр-хĕтĕрĕпе пуянлатнă, апатлану вырăнĕсемпе столовăйсене çĕнетнĕ.

Чăваш Енре обществăра çемье, ача хаклăхсене йĕркелеме, ашшĕ-амăшĕн яваплăхне ӳстерме, усрав çемье институтне ырласа йышăнма пулăшакан мерăсем вăя кĕреççĕ.

Республикăра ашшĕ-амăшĕн асăрхавĕсĕр тăрса юлнă ачасен тӳпи чакса пынин кăтартăвĕ, çĕр-шывĕпе илсен те, чи лайăххисенчен пĕри. Ача усрама илекенсене хавхалантарас тĕллевпе ача усрава илнĕ граждансене 300 пин тенкĕ, сусăр ачана усрава илнисене пĕр ачашăн 375 пин тенкĕ виçепе пĕр хутчен паракан пособи тӳлеççĕ.

Çамрăк тата нумай ачаллă çемьесене пулăшас, ачасен сывлăхне çирĕплетес тата канăвне йĕркелес тĕллевлĕ программăсем ăнăçлă пурнăçланаççĕ.

Хăйсен ĕçне кура тата чун-чĕри хушнипе ачасен ырлăхĕшĕн пĕтĕм вăй-халне парса тăрăшакан мĕн пур çынна тав сăмахĕ калатăп. Эпĕ тăван пепкисене кăна мар, усрава илнĕ ачасене те тивĕçлипе пăхса çитĕнтерекен çемьесене, нумай ачаллă çемьесене те чунтан тав тăватăп.

Хисеплĕ аслисем! Ачасене чунтан юратăр, вĕсемшĕн тимлĕн тăрăшăр. Чăваш Енĕн çамрăк гражданĕсен ачалăхĕ савăнăçлă та телейлĕ пултăр. Кашни килтех йăл кулă çиçтĕр тата ача-пăча кулли янăратăр. Пурне те тăнăçлăх, ырлăх тата телей!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ**
**М. ИГНАТЬЕВ.**

**ХАКЛĂ АЧАСЕМ ТАТА АШШĔ-АМĂШĔСЕМ!**

Сире çывхарса килекен Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Ачалăх кашнин пурнăçĕнче асра юлать. Вăл мĕнле пуласси вара пирĕнтен, аслисенчен, нумай килет. Ачасем пурнăçра хăйсен вырăнне тупчăр, вĕсен ачалăхĕ телейлĕ пултăр тесе тăрăшмалла. Ашшĕ-амăшĕсем, воспитательсем, вĕрентекенсем хăйсен тивĕçĕсене чун-чĕре хушнă пек пурнăçлани кирлĕ кунта. Вара пирĕн пуласлăх шанчăклă та çирĕп аласенче пулĕ. Чăваш Республикин, РФ Правительствисем телейлĕ ачалăхшăн тăрăшнине вĕсем ачаллă çемьесене пулăшас тĕллевпе тунă утăмсем те çирĕплетсе параççĕ.

Пирĕн вара, ашшĕ-амăшĕсен, хамăр ачасен шăпишĕн, вĕсен пуласлăхĕшĕн хамăр яваплине асрах тытмалла. Вĕсем савăнăç кӳччĕр, ватлăхра пирĕн хӳтлĕх пулччăр тесен, вĕсемпе пĕчĕк чухнех тимлĕ пуласчĕ, тĕрĕс воспитани парасчĕ. Вĕсем пур енлĕн тĕрĕс аталанччăр тесе куллен тăрăшасчĕ. Вĕсене пурнăçри йывăрлăхсемпе кĕрешме, çĕнтерме вĕрентесчĕ. Хамăрăн ку енĕпе ачасемшĕн ырă тĕслĕх пулмаллине манса кайма юрамасть.

Пурне те çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, ăнăçу, телей сунатăп. Хуйхă-суйхă сирĕн çывăха та ан пытăр. Ачăрсем савăнăç çеç кӳччĕр.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. ТИМОФЕЕВ.**

### Раççейре

## Чăвашсем – "Туриада" çĕнтерӳçисем

"Туриада – 2014" спортпа турист лагерĕн ĕç-хĕлне Атăл çи федераци округĕн 600 ытла çамрăк спортсменĕ хутшăннă. Саратов облаçĕнче иртнĕ ăмăртусен пĕтĕмлетĕвĕпе Чăваш Ен команди – 40 çынран тăракан ушкăн – мала тухма пултарнă. Хыççăнхи вырăнсенче Тутар Республикин тата Мари Эл Республикин спортсменĕсем.

Аса илтеретпĕр, "Туриада – 2014" майăн 21-мĕшĕнче пуçланса тăватă куна тăсăлнă. Çак тапхăрти спорт, культура тата туризм енĕпе иртнĕ тупăшусенче чăваш çамрăкĕсем малти вырăнсене пĕрре мар çĕнсе илнĕ: "Люблю тебя, Поволжье" фотокросра, "Лучшая разработка туристического межрегионального маршрута" конкурсра, автор юррисен "Музыка сердец" конкурсĕнче тата ыттисенче те.

Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Атăл çи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Михаил Бабич та "Туриадăна" çитсе курнă. Вăл спортăн çак тĕсне массăллăн хутшăнасси патне çывхарнин пысăк пĕлтерĕшне палăртнă. Малтанхи çулсемпе танлаштарсан, тупăшу чылай çивĕчрех иртнине тата хутшăнакансен йышĕ самаях пысăкланнине пĕлтернĕ. "Туриадăна" муниципалитетсенчи шкулсен, турист клубĕсен хутшăнма май пуррине ырланă.

**Хамăр инф.**

# Тивĕçлĕ кадр çителĕклĕ пултăр

**Пĕрлехи информаци кунĕнчен**

***Районта майăн 21-мĕшĕнче Пĕрлехи информаци кунĕ пулни, çак ĕçе ирттерме района республикăн тĕп хулинчен Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕн çумĕ Николай Якимов ертсе пыракан ушкăн килни çинчен çырнăччĕ. Николай Петрович районти лару-тăрупа кăмăллă юлчĕ, ĕç коллективĕсемпе тĕл пулни, çавна май çĕр ĕçченĕпе тачăрах тĕл пулса калаçни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртрĕ. Самантпа усă курса эпĕ Николай Петровичран хăш-пĕр ыйту çине хуравлама ыйтрăм.***



**– Николай Петрович, эсир ял хуçалăх ĕçĕнче чылай çул тимлетĕр, тĕрлĕ тăрăха çитсе куратăр. Çапах та паянхи ĕçлĕ çул çӳреве мĕнле хакланă пулăттăр?**

– Пĕр тунмасăр калатăп, Муркаш районĕн ĕçченĕсем ял хуçалăх аталанăвне пысăк тӳпе хываççĕ. Çакна чылай ĕç-хĕл çирĕплетет. Акă Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Толстов хресчен (фермер) хуçалăхĕ аталанни лайăх курăнать. Çакăн пек пуçаруллă çынсем ытларах пулсан татах та лайăх пулмалла. Вăл 600 гектар çĕр лаптăкĕпе тухăçлă усă курать. Хăш-пĕр хуçалăх ертӳçи вăл е ку продукци йӳннипе акма-лартма васкамасть пулсан, кунта тĕрлĕ йышши культура лартса ӳстереççĕ. Горчица, мордовник, йĕтĕн, крамбе, рыжик йышшисене чылайăшĕ илтмен, тăрăшуллă ертӳçĕ вĕсене вырнаçтарассипе килĕшӳсем тунă та ĕнтĕ. Çавăн пекех ытти хуçалăхра та ĕç калкал пырать.

Республика шайĕнче те çурхи акасуха ĕçĕ япăх мар пурнăçланчĕ. Çак ĕç валли вăрлăх хуçалăхсенче пĕтĕмпе 50,7 пин тонна е, иртнĕ çулхи çак тапхăртипе танлаштарсан, 106 процент хатĕрленĕ.

Хушма хуçалăх тытакансем ĕне йышне чакарни, паллах, пăшăрхантарать. Çакă тен пурнăç условийĕ лайăхланнипе çыхăннă, тен ял ватăлса пынипе. Ку секторта çулталăкăн пĕрремĕш кварталĕнче сĕт туса илесси республика шайĕнче 5, 9 процент чухлĕ чакрĕ.

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче хальлĕхе выльăх йышĕ чаксах кайни курăнмасть-ха. Республика Пуçлăхĕ те, Раççей шайĕнче те выльăх-чĕрлĕх йышне чакма парас мар тесе конкретлă мерăсем йышăнаççĕ.

**– Кашниех аван ăнланать, ял хуçалăх ĕçĕнче уйрăм вăй-хăват кăна çителĕксĕр. Кунта вара патшалăх пулăшăвĕ питĕ вырăнлă, унăн шайĕ тивĕçтерет-и ял ĕçченне?**

– Пулăшу вăл нихăçан та ытлашши мар пулĕ. Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин Правительствисем ял хуçалăх аталанăвĕ валли тĕрлĕ программа йышăннипе ял хуçалăхĕсене субсидилесси малалла пырать. Кăçалтан тепĕр пулăшу вăя кĕрет, çĕр улми туса илесси çине ытларах тимлĕх уйăрма пуçланă май çак продукцие упрамалли хранилище тунăшăн патшалăх вăтăр процент чухлĕ субсидилет. Калăпăр, çакна валли пĕр миллион тенкĕ тăкакланă пулсан, патшалăх виççĕр пин тенкине каялла тавăрса парать. Çавăн пекех ытти дотаци те вăйра тăрать.

Чăваш Республикинчи агропромышленность комплексне аталантарма 2,0 миллиард тенкĕ укçа пăхса хунă. Çак тапхăр тĕлне ял хуçалăхĕсем патне 799, 6 миллион тенкĕ çитнĕ те ĕнтĕ, ку иртнĕ çулхи çак вăхăтрипе танлаштарсан 110 процент пулать, вăл шутран 591, 5 миллион тенкĕ – федераци бюджетĕнчен, республика бюджетĕнчен – 208, 1 миллион тенкĕ.

**– Ял хуçалăхĕнчи кадрсем пирки мĕн калană пулăттăр?**

– Шел пулин те, ял хуçалăхĕ валли кадрсем сахал. Механизаторсем, зоотехниксем, агрономсем, ветеринарсем çителĕксĕр. Ку вăл ĕç укçи шайĕ пĕчĕк пулнипе те çыхăннă пулĕ.

Çапах та ял хуçалăхне çамрăк специалистсемпе тивĕçтерес, çамрăк çемьесене ялта пурăнма условисем туса парас тесе Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин Правительствисем тĕрлĕ программа йышăнаççĕ. Вĕсене туллин вăя кĕртнĕ май лару-тăру ырă еннелле улшăнмалла.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

# Ял культурине – уйрăм тĕрев

**Çивĕч ыйту**

Иртнĕ уйăх вĕçĕнче Раççей Президенчĕ Владимир Путин Президент çумĕнчи нацин пĕлтерĕшлĕ проекчĕсемпе демографи политикин ыйтăвĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ĕçлекен Канашпа Патшалăх канашĕн пĕрлехи ларăвне ирттернĕ. Унти тĕп калаçу ял территорийĕсене аталантарасси таврă пулнă.

"Ял территорийĕсем экономика, демографи, çут çанталăк тата историпе культура енĕпе шайлашуллă тата пуян. Пирĕн тĕллев – унпа тухăçлă, пĕлсе, çĕр-шыв интересĕсене тĕпе хурса усă курасси, миллион-миллион гражданăн пурнăç пахалăхне çĕклесси. Çав вăхăтрах пирĕн çакна асра тытмалла: ял Раççейшĕн – апат-çимĕç хатĕрлекен тăрăх çеç мар. Вăл – йăлана кĕрсе çирĕпленнĕ йĕрке, пурнăç майĕ. Вăл – пирĕн культурăн пуянлăхĕ тата питĕ пысăк çĕр-шывăмăрти нумай нациллĕ халăхăн хăйне евĕрлĕ тытăмĕ", – палăртнă Владимир Путин.

Паянхи яла квалификациллĕ специалистсем кирлĕ. Çамрăксене яллă вырăнпа ытларах кăсăклантарассипе çĕр-шыв пуçлăхĕ çавăн пек çынсем мĕн чухлĕ кирлине палăртма тата кашни регионти ял территорийĕсенчех вĕсене хатĕрлеме условисем туса пама сĕннĕ.

Пирĕн республикăра ку енĕпе лару-тăру мĕнлерех-ха? Чăваш Республикин культура министерстви ялти культура учрежденийĕсене аталантарас тĕлĕшпе тĕллевлĕ ĕçленине палăртать. 2008 – 2013 çулсенче 159 клуб çуртне тĕпрен юсаса çĕнетнĕ. Çак тĕллевпе Чăваш Республикин бюджетĕнчен 107,7 миллион тенкĕ уйăрнă (кашни клуба вăтамран 677 пин тенкĕ тивет). Асăннă 159 клубран 84-шĕ çутă, сасă, видеопроекци, компьютер оборудованийĕпе, сцена тумĕпе пуянланнă. 2014 çулта ял клубĕсене тĕпрен юсама республика бюджетĕнче тата 22721,4 пин тенкĕ хывса хăварнă. Çак укçапа татах тепĕр 27 клуба çĕнетме май килĕ.

Иртнĕ çул Муркаш районĕнчи Мăн Сĕнтĕрти культура çуртне хута янă. Ăна тума Чăваш Ен республика бюджетĕнчен 18972 пин тенкĕ куçарса панă. Хальхи вăхăтра Сĕнтĕрвăрри районĕнче тепĕр клуб тума пуçланă, вăл 2015 çулта хута кайĕ.

Иртсе пыракан çул пуçламăш тĕлне республикăн муниципалитет тытăмĕнче культурăпа канăвăн 750 учрежденийĕ вăйра тăрать. Çав вăхăтрах инçетре вырнаçнă тата сахал йышлă ялсен 43,6 проценчĕ стационарлă клуб учрежденийĕ шутланать.

Республикăра клубсене спонсор пулăшăвĕ шучĕпе е ялсенчи çамрăксем хăйсен вăйĕпе çĕкленĕ, тĕпрен юсанă тĕслĕх чылай. Сăмахран, Шупашкар районĕнчи Атăльялĕнчи культура çуртне спонсорсен укçи-тенкипе çĕнĕ варкăш кĕртнĕ. 2009 çулта Муркаш районĕнчи Яракри çамрăксен вăйĕпе туса лартнă клуб хута кайнă.

Муниципалитет тытăмĕнче 749 культурăпа кану учрежденийĕ, 536 библиотека, 13 музей, культурăпа кану паркĕсем 7, çавăн пекех 25 архив тата ачасене хушма пĕлӳ паракан 46 шкул.

Кăçалхи майăн 1-мĕшĕ тĕлне Чăваш Республикин культура сферинче 6276 çын шутланать. Вĕсенчен 1885-шĕ патшалăх учрежденийĕсенче, 4391-шĕ муниципалитет тытăмĕнче вăй хурать.

**Р. АЛЕКСАНДРОВА.**

**Тăрăшуллă ĕçченсем**

# Ĕçлес туртăмĕ пысăк

Юрий Юрьевич Иванов Москакассинчи вăтам шкулта 1996 çулта Чăваш патшалăх педагогика институчĕн индустрипе педагогика факультетĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн ĕçлеме пуçланă. Çамрăк специалист малтанхи çулсенче технологи урокĕсене, унпа пĕрлех йывăçран эрешсем касса ăсталассипе тата фотокружок ертсе пынă, арçын ачасене "трактор" вĕрентнĕ пулсан халĕ вăл технологи урокĕсене тата ОБЖ предметне вĕрентет, пăшалтан тĕл пересcипе кружок ертсе пырать.

Юрий Юрьевичăн вĕренекенĕсем олимпиадăсенче те мала пĕрре мар тухнă. Çамрăк армеецсен "Зарница" тата "Орленок" вăййисенче вара юлашки çулсенче Москакассисем яланах малтисен ретĕнче. Кăçал акă Москакасси шкулĕнчи "орленоксем" çĕнтерӳçĕсен ретне тăчĕç, пĕлтĕр вĕсем 2-мĕш, малтанхи çул 3-мĕш вырăн йышăннă.

– Çамрăк армеецсен юхăмĕн вăййисене хутшăнма ачасемпе сахал мар хатĕрленмелле. Ачасемпе мотопомпăпа шыв сирпĕтсе те пăхатпăр, пушарнăйсен кивĕ шыв пăрăхĕсене те ачасене лайăхрах хатĕрлес тесех "тупнă" ĕнтĕ, – çапла кĕскен кăна хуравларĕ Юрий Юрьевич çамрăк армеецсемпе вăйăсене мĕнлерех хатĕрленнипе кăсăклансан.

ОБЖ предмечĕ кашни ачашăн пĕлтерĕшлĕ тесе шутлать вĕрентекен. Çакна вăл предмет пурнăçпа çыхăннипе ăнлантарать.

– Юлашки çулсенче хĕр ачасем чăтăмлăхпа, çирĕплĕхпе арçын ачасенчен иртterni палăрать. Йывăçран тĕрлĕ хатĕр касса кăларассипе те, çар ĕçĕпе те хĕрсем ытларах кăсăкланаççĕ. Арçын ачасен халĕ чăтăмлăх сахалрах пулас. Малтанхи çулсенче кунта вĕреннĕ Петр Егоров, Юра Матросов, Юра Егоров, Денис Ребриков тата ытти хăш-пĕр ачасем ку енĕпе пултарулли тӳрех палăратчĕ. Вĕсем хăйсем те тăрăшатчĕç. Юра Матросов республика шайĕнчи олимпиадăна та хутшăнма тивĕç пулнăччĕ", – терĕ педагог ачасен ĕçлес туртăмĕ пирки ыйтсан.



Вĕрентекенĕн вара хăйĕн ĕçлес туртăмĕ пысăкки палăрать: ачасем валли урокра е кружокра усă курма тĕрлĕ хатĕр-хĕтĕре чылай чух хăех тупма тăрăшать. Юлашки çулсенче вара вĕренӳ сферинчи программăпах мастерской пуянланни пысăк тĕкĕ пулнине палăртать Юрий Юрьевич, çакăнпа пĕрлех вырăнти предпринимателе П. Терентьева та тав сăмахĕ калать. "Ăнланать яланах, пулăшма тăрăшать", – тет ун пирки.

– Вĕренекенсем ку таранччен эсир пире тĕрĕс мар вăрçнă тесе каламан. Çакă маншăн пĕлтерĕшлĕ, – тесе хуравларĕ пуçаруллă вĕрентекен.

Пуçарулăхне вара хăй яланах çĕнни шырани те, учитель сĕтелĕ çинчи методика журналĕсемпе пособийĕсем те, республика шайĕнчи Хисеп грамотисемпе ытти награда та çирĕплетеççĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Саламлатпăр**



Елшик ялĕнче пурăнакан хисеплĕрен те хисеплĕ, ылтăн-кĕмĕлтен те хаклăрах, хĕвелтен те ăшăрах, çĕр çинчи чи юратнă çыннăмăра – **Елизавета Константиновна РОМАНОВĂНА** 80 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм ĕмĕр, тапса тăракан çăл куç пек иксĕлми вăй-хал, телей сунатпăр.

Тав сана пуриншĕн те чунтан,<br>
Эсĕ хаклă кĕмĕл-ылтăнран,<br>
Эс пурри пире савăнтарать,<br>
Пурăнма вăй-хал парса тăрать.

**Салампа: ывăлĕпе хĕрĕ, кинĕпе кĕрӳшĕ, 5 мăнукĕ, 4 кĕçĕн мăнукĕ.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă асаннене, хисеплĕ кукамая, ырă кăмăллă çывăх тăвана – Отаркка ялĕнче пурăнакан **Татьяна Прокопьевна БОРИСОВĂНА** çуралнă кунĕ ячĕпе саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, тапса тăракан çăл куç пек иксĕлми вăй-хал, тумхахсăр кун-çул, телей сунатпăр. Санăн ялан хавас кăмăл пултăр, чун ăшши нихăçан та ан иксĕлтĕр. Эс пурришĕн Турра тав тумашкăн сăмах та çитмест. Ырă кăмăлушăн, йывăр вăхăтра сан çунаттусем айĕнче канлĕх те ăнланулăх тупма пулăшнăшăн, пирĕншĕн тăрăшнăшăн çĕре çити тайма пуç. Эпир сана юрататпăр.

**Ăшă салампа: ывăлĕсемпе хĕрĕ, кинĕсемпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, хăтипе тăхлачи, кӳршисем, çывăх тăванĕсем.**



Юратнă аннене, хунямана, йăваш та çепĕç мамака, кукамая, асаннене – Шаптак ялĕнче пурăнакан **Феврония Архиповна СТЕПАНОВĂНА** 90 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, юхан шыв пек вăрăм кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, телей, ăнăçу сунатпăр. Эсĕ пирĕншĕн – пысăк телей, кил ăшши. Тайма пуç сана пуриншĕн те. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтӳсем çитсе пыччăр, пире савăнтарса пурăнма Турри сана тата нумай-нумай çул усратăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕ, хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем тата кĕçĕн мăнукĕсем.**



Поздравляем нашу дорогую, любимую жену, маму, бабушку – **УГЛЕВУ Людмилу Александровну** с юбилеем.

От всей души с большим волненьем<br>
Мы поздравляем с юбилеем,<br>
Чудесным праздником тебя!<br>
Желаем много-много счастья,<br>
Хорошей и большой любви,<br>
Пусть обойдут тебя ненастья,<br>
В далеком жизненном пути.<br>
Хотим, чтоб жизнь была светла,<br>
Чтоб ты веселою была,<br>
И чтоб лихих не знала бед.<br>
Живи, родная, много лет.

**Муж, дочери, зятья и внуки.**

**Информаци кунĕнчен**

# Кама мĕн хумхантарать

**"Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Матьăк, Çĕмĕрткасси, Раккаш ялĕсенче электропередача линийĕсене хăçан улăштарма палăртаççĕ?"**

**А. КУЗЬМИН, Йӳçкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ.**

Чăваш Республикин Строительство министерстви пĕлтернĕ тăрăх "МРСК Волги" – "Чувашэнерго" уçă акционерлă обществăн филиалĕн чылай вăхăтлăхлă ĕç планĕпе килĕшӳллĕн Раккаш ялĕнче çак линисене улăштарассипе 2018 çулта, Çĕмĕрткассинче – 2019 çулта, Матьăкра 2020 çулта ĕçлеме палăртнă.

**"Ивановка ялĕ çывăхĕнчи йăлари хытă каяш полигонне тума республика бюджетĕнчен субсиди уйăраççĕ-и?"**

**В. АНАНЬЕВ, район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ.**

Чăваш Ен Çут çанталăк ресурсĕсемпе экологи министерстви пĕлтернĕ тăрăх 2013 çулта "Повышение экологической безопасности в Чувашской Республике на 2010 – 2015 годы" республикăн тĕллевлĕ программипе килĕшӳллĕн "Полигон твердых бытовых отходов в Моргаушском районе" объект валли республика бюджетĕнчен 8486,9 пин тенкĕ уйăрнă.

Муркаш районĕнчи йăлари хытă каяш полигонне тăвассин кредитор парăмĕн юлашки пайне, 4550,0 пин тенкине, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 2014 çулхи январĕн 20-мĕшĕнчи хушăвĕпе килĕшӳллĕн Муркаш районне харпăр хăй укçи-тенкипе татса пама хушнă.

Çак хурава район администрацине 2014 çулхи январĕн 23-мĕшĕнче панă.

**"Муркаш шкулĕн вĕренӳ лаптăкне маларах интернат пулнă çурта капиталлă юсав ирттерсе анлăлатма, ăна валли хушма укçа-тенкĕ уйăрма пулмасть-и?»**

**Н. СМИРНОВ, Муркаш шкулĕн директорĕ.**

Чăваш Ен Вĕренӳпе çамрăксен политикин министерстви пĕлтернĕ тăрăх федерацин 2012 çулхи декабрĕн 29-мĕшĕнчи саккунĕпе килĕшӳллĕн муниципалитет шайĕнчи учрежденисен капиталлă юсав ĕçĕсене ирттересси – вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем çинче.

2014 çулта вăя кĕрекен программăсем шайĕнче муниципалитет шайĕнчи вĕренӳ организацийĕсенче капиталлă юсав ирттерессине субсидилессине республика тата федераци бюджечĕсенче пăхса хăварман.

Çӳлерех асăннисене тĕпе хурса Чăваш Ен Вĕренӳпе çамрăксен политикин министерстви район администрацине çак ĕç валли район бюджетне 2014 çул валли тишкернĕ чухне майсем пăхса тухма сĕннĕ.

**Р. МАКАРОВА.**

Хушма пĕлÿ

# Ача-пăча сассиллĕ юлашки шăнкăрав



Паянхи пурнăçра ачан шкултан пĕлÿ пухса кăна мар, тĕрлĕ енлĕ аталанса ыттисемпе конкуренцие хутшăнма та пултармалла. Çавăнпа ачана хушма пĕлÿ парасси çине патшалăх енчен те пысăк тимлĕх пур. Пирĕн районта та акă хушма пĕлÿ паракан тăватă вĕренÿ учрежденийĕ ĕçлет. Вĕсенче çак вĕренÿ çулĕнче пĕтĕмĕшле илсен районти вĕренекенсен 73,5 процентĕ хушма пĕлÿ илнĕ.

Муркашри ача-пăча искусство шкулĕнче пĕлÿ илнине çирĕплетекен свидетельствăна 35 ача алла илчĕ. Художество уйрăмне 7 ача, музыка уйрăмне 2 ача, пĕтĕмĕшле эстетика уйрăмне 1 ача вĕренсе пĕтернĕ, ыттисем – хореографи уйрăмне.

Муркашри ял тăрăхĕсем хушшинчи информаципе кану центрĕнче çакна халалласа савăнăçлă пысăк мероприяти пулчĕ. Шкулта вĕренекен ачасемпе пĕрлех вĕсен вĕрентекенĕсем кăна мар, ашшĕ-амăшĕ те чылайăн пухăнчĕ. Хушма пĕлÿ илни кашни ачана малашне пулăшса пыни пирки сăмах хускатса район администрацийĕн вĕренÿ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ертÿçи З. Дипломатова, культурăпа туризм пайĕн ертÿçи Е. Чернова та ачасене саламларĕç. Шкул директорĕпе О. Григорьевăпа пĕрле ачасене свидетельствăсем парса вĕсене малашлăхра пуçаруллă пулма сунчĕç.

Ачасем пуçаруллă та хастар пуласси вара иккĕлентермест. Ку шкулта вĕренекенсем вĕренÿ çулĕсенчех пысăк шайри çитĕнÿсемпе мухтанма пултараççĕ. Шкултан вĕренсе тухсан та нумайăшĕ кунта килсе çÿрет, мĕншĕн тесен искусство шкулĕнче чăнах та пултаруллă педагогсем вăй хураççĕ.

**Сăн ÿкерчĕкре: алăра – "хаклă" документ.**

**Н. ДИМИТРИЕВА**
**сăн ÿкерчĕкĕ.**

Çу кунĕсем тата пушар хăрушсăрлăхĕ

# Инкекрен сыхланасси – пĕрлехи ĕç

Ирĕке кайнă вут-çулăм шелсĕр. Вăл туххăмрах хăй хыççăн шĕл кăвар хăварса пурăнмалли çурт-йĕре, хушма хуралтăсене, пурлăха илсе тухса каять. Унран та ытларах инкек вăл – пушарта çын пурнăçĕ татăлни. Халĕ калани кашниншĕнех паллă, анчах пушар хуралĕнче тăракансем час-часах пулăшăва васкани кил-çурт хуçисем нумай чух пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнманни е сĕмсĕррĕн пăсни çинчен калать. "Хĕрлĕ автан" çунат çапма пуçланин тĕп сăлтавĕсем: усă çулăмпа асăрханусăр пулни – 17 процент, электроприборсене эксплуатацилес е электричествăпа усă курас правилăсене пăсни – 39 процент, ачасем шăрпăкпа выляни – 5 процент, кăмакасен юсавсăрлăхĕ – 28 процент. Халĕ илсе кăтартнă цифрăсем пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнасси çине пысăк тимлĕх уйăрмалли пирки калаççĕ. Апла пулин те...

Район территорийĕнче кăçалхи 5 уйăхра тухнă пушарсене регистрацилемелли журнала уçса пăхатпăр. "Хĕрлĕ автан" ытларах ялта е дачăра пурăнакан хуçалăхсене иленни курăнать.

Нумай кил-çурт хуçипе предприяти-организаци ертÿçи пушар хăрушсăрлăх правилисене саккун ыйтнă пек пăхăнманнине укçа-тенкĕ çуккипе çыхăнтарать. Анчах электрохуçалăхра "жучоксем" вырăнне йĕркеллĕ калибрлă предохранительсем вырнаçтарма, кăмакасене юсама, мăрьесене хăрăмран тасатма, кăмака умне 50х70 сантиметр виçеллĕ тимĕр листа çапма, мачча çинчи мăрьене штукатуркăласа шурăпа сăрласа тăма нумай укça кирлĕ-и? Çук. Кунта ыранхи кун пирки шутлани малти вырăнта тăмалла кăна. Халĕ калани çумне çынсем хăйсем ăсталанă электроприборсемпе усă курни, пÿрт-çурт патĕнчен 50 метртан çывăхра кăвайт чĕртни, çурт-йĕр таврашĕнче типĕ курăк çунтарни, ÿсĕрле пирус туртни, мунчасенчи мăрьесене мачча хăмисенчен 38 сантиметр уйăрманни пушар тухасси патне илсе пырать те. Çак сăлтавсем районта пурăнакансене çу кунĕсем пуçланнă май хытах шухăшлаттарма тивĕç тесе шутлатăп. Ахальлĕн паян пур пурлăх самантрах кĕл пулса çилпе вĕçме пултарать. Кун хыçĕнче вара пысăк хурлăх тăрать.

Ан манăр, çулăм вăл хăйĕнпе çителĕклĕ контрольлесе усă курсан çеç юлташ, тимлĕхе çухатсан вара... Çавăнпа та районта пурăнакансене çу кунĕсенче унпа питех те асăрханУллă пулмалли пирки асăрхаттаратăп.

Кăçал районта 19 пушар алхасрĕ. Ку вăл пĕлтĕрхи çак вăхăтринчен пĕр тĕслĕх сахалрах, анчах çакă лăпланмалли сăлтав мар, мĕншĕн тесен çулăмăн хăрушлăхĕ питĕ пысăк. Ĕнерхи куна ирĕке кайнă çулăм районта 4 дача çуртне, 14 килти хушма хуçалăха, пĕр магазина сăтăр кÿчĕ е тĕп турĕ. Миллионшар тенкĕлĕх пурлăх кĕлленнипе пĕрлех пушарта 3 çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ. Килти хушма хуçалăхра пушар тухнă тĕслĕхсене тишкерер-ха. "Хĕрлĕ автан" 9 хутчен пурăнмалли çуртра, 4 тĕслĕхре хушма хуралтăра, 3 – мунчара алхаснă.

Хăш-пĕр асăрхаттаруллă тĕслĕхсем çинче уйрăммăн чарăнса тăрам-ха. Апрелĕн 6-мĕшĕнче Çĕлеменкассинче пурăнакан Ю. Андреев хуçалăхĕнче пушар тухни пирки хыпар çитрĕ. Çийĕнчех вырăна тухрăмăр, анчах... Хыççăнхи тĕрĕслев кил хуçипе пиччĕшĕ ÿсĕрле пирус туртнинчен вăй илнĕ "хĕрлĕ автан" тыткăнĕнчен хăйсем те тухайманнине кăтартрĕ. Çакнашкал сăлтавпах февралĕн 28-мĕшĕнче Калайкассинчи пĕр килти хушма хуçалăхра тухнă пушарта çын пурнăçĕ татăлнăччĕ.

Электроприборсемпе тата электричествăпа усă курнă чух пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнманни те инкеке çывхартать. Апрелĕн 20-мĕшĕнче çак сăлтавпа Кĕрекаçри пĕр йывăç пÿрт кĕлленчĕ. Асăннă сăлтавсемпех кăрлач уйăхĕнче Ивановкăра тата Шомикра, нарăсра Лап Олкашра, Çатракассинче, "Волга" сад юлташлăхĕнче пушар тухрĕ.

Пĕр тĕслĕхре ачасем шăрпăкпа вылянипе тухнă пушарта пĕтĕм кил-çурт çунса кайрĕ.

Асăннă инкексем пулмасан та пултарнă, анчах... Чавса çывăх та çыртма çук. Çу кунĕсенче пурин те пушар хăрушсăрлăхĕпе тимлĕрех пуласчĕ. Ачасем çуллахи каникула кайнă май шкулсенче вĕрентекенсен вĕсемпе тĕплĕ ăнлантару ĕçĕсем ирттерессе шанатпăр. Пĕрлехи тимлĕх пурнăç илемлĕхне ÿстерĕ кăна.

**О. БАСКАКОВ,**
**районти патшалăх пушар надзор уйрăмĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене вăхăтлăх туса пыраканĕ.**

Çĕре юратса – малашлăха шанса

# Халăхран тухнă председатель

Каялла утăм ырана пăхса пурăнакан валли мар. Йывăрлăхсене çĕнтерсе, çĕнĕлĕхсемпе юнашар тăрса малашлăха пăхса ĕçлесен çеç экономика аталанăвне тивĕçлĕ шайра сыхласа хăварма май пур. Çакна ăнланакан хуçан экономики кашни утăмра çирĕпленсе пырать. Ăна алла илекен ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăнинчен те тĕлĕнме кирлĕ мар.

"Арçыннăн пурнăçра виçĕ ĕç пурнăçламалла, – тет халăхăмăр ăслăлăхĕ. – Тулли пурнăç йĕркелеме çурт тумалла, йывăç лартмалла, ача çуратса ÿстермелле". Философи енчен пăхсан кун хыçĕнче çут çанталăкăн тулли илемĕ, пурнăç аталанăвĕ тăрать. Çатракасси ял тăрăхĕнчи тĕп усадьбăра 10 ачаллă хресчен çемйинче çуралса ÿснĕ Кронид Ефимович Сретинский хăйĕн ĕмĕрĕнче çаксене йăлтах пурнăçланă. Çиччĕ виççе пăхсан тен ытларах та-и?... Шăпах çакăн çине хурав шыраса тапратрăм та эпĕ паянхи калаçу-аса илĕве.

– Хресчен çемйинче çуралса ÿснĕренех-тăр эпĕ ачаран уй-хир тăрăх çÿреме, Çĕр-аннемĕр илемĕпе тата унăн вăй-хăвачĕпе киленме юратса, унăн пулăхлăхне ÿстерекенсемшĕн чунтан савăнса çитĕнтĕм. "Свобода" хуçалăхра уй-хир бригадин ĕçченĕнче, агрономра тата председательте ĕçленĕ çулсенче тăван колхоз уй-хирĕпе талăксерен вуншар километр çÿреттĕм. Çак ырă йăлана эпĕ çĕр ĕçĕнче маларах ĕçленĕ аслă юлташăмсенчен куллен алла илсе пытăм, – тенĕччĕ Кронид Ефимович çур аки вăхăтĕнчи пĕр калаçура. Хăй вара çурхи çав кун ытти чухнехиллех ирхи 4 – 6 сехетсенче хуçалăх хирĕсемпе çаврăнса правлени кантурĕ умне çитнĕччĕ. – Çĕр ĕçченĕ хушнă ĕçе пурнăçланишĕн паян савăнатăп кăна. Кун пекех пулсан ял çыннисене çурт-йĕр çавăрма хуçалăх енчен пулăшасси пирки хирĕçле епле шутлăн?

Çапла калаçса председатель черетлĕ ĕç кунĕ валли радиопа наряд пама кантура кĕрсе кайрĕ...

Çур аки тапхăрĕнчи çак тĕл пулуранпа чĕрĕк ĕмĕре яхăн хыçа юлчĕ ĕнтĕ. Кронид Ефимович та пирĕн хушăра çук. Анчах халăхран тухнă председатель пулăшăвĕпе усă курнисемшĕн вăл паян та стройра тăрать, ырăпа асра пурăнать.

Çĕр ĕçĕнче ирттернĕ пурнăç тесе хакламалла пулĕ К. Сретинскийăн ял хуçалăх производствинчи ĕмĕрне. Çапла пĕтĕмлетÿ тунипе аслărах ăрурисем манпа килĕшеççех тесе шутлатăп. Ыранхи аталану хамăр умри ĕç-хĕл çине эпир паян мĕнле пăхнинчен, тĕллевĕмĕрсене татса парассипе çак самантра епле тимленинчен пуçланать. Ăрусен тытăмĕпе пăхсан аталану никĕсĕ – производствăра паян ĕçлекенсене тата унччен вăй хунисене туллин чысланинче те.

Кронид Ефимович – пуян районăмăрăн 70 çулхи историйĕн пĕр пайĕ. Анчах пĕр пай пулсан та, çирĕп пай. Çапла калани – малаллахи сăмахăмăн никĕсĕ.

**АТТЕ ТЕСЕ КУРАЙМАН**

Кашни вăхăтăн хăйĕн йывăрлăхĕ, анчах 1941 – 1945 çулсенчи Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ахрăмĕ паян та пирĕнтен тĕппипех уйрăлман-ха. Аслă ÿсĕмрисен чĕри çумĕнчен вăрçă кÿнĕ суран тÿрленмен...

Каларăм ĕнтĕ, Кронид вунă ачаллă хресчен çемйинче çуралнă. Ашшĕ фашистла Германи пирĕн ума кăларса тăратнă йывăр вăхăтра ирĕклĕхе сыхлама Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин фронтне тухса кайсан, арçын ача 1942 çулхи çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕнче çут тĕнчене килнĕ. Çавăнпа та нимĕç фашисчĕсемпе çĕр-шыв ирĕклĕхĕшĕн çапăçса пуç хунă ашшĕн чĕр куççийĕ çинче утьăкка сикме тÿр килмен ăна. Вăл çулсенчи миллионшар ача пекех армути икерчи çисе ÿснĕ Кронидăн та кĕнеке вулама вĕреничченех çĕр ĕçĕпе туслашма тивнĕ: пахчара ана пуснă, йăран çумланă, выльăх-чĕрлĕхпе чăх-чĕп пăхнă. Вăл вăхăтри ахăр саманара ача-пăча çулпа мар, кунпа ÿснĕ. Вĕсем пĕчĕккĕллех аслисемпе тан тăрса тăван хирте çурлапа тырă вырнă, лашапа кĕлте турттарнă, ыттисемпе ăмăртса авăн çапнă, каç пулсан улăха лаша пăхма кайнă...

Аслă вăрçă кĕрлеме чарăнсан ял çыннисем мирлĕ пурнăçпа ыррине шанса пурăнма пуçлаççĕ, çĕнĕ ĕмĕт-тĕллев вăй илет. Пĕрремĕш вырăна Тăван çĕр-шыва сыхлассине кăларнă çамрăксем те фронтран таврăнсан хутла вĕренесси енне туртăнма пуçлаççĕ. Хăйĕн пурнăçĕнче çăмăл ĕç шыраман, икĕ алла пĕр ĕç тесе хушнă ĕçрен тиркесе пăрăнман Кронид та пурнăç çав вăхăтра ыйтнинчен катара тăрса юлмасть. Çатракассинчи 7 креслă шкултан вĕренсе тухсан мал ĕмĕтпе çунатланнă каччă Муркашри вăтам шкула вĕренме кĕрет. Хăйĕн вăхăтĕнчисене тăрăшулăхне кура вĕренме, таса-сывă ÿссе аталанма ашшĕсем хаяр вăрçă хирĕнче çул уçса панишĕн ĕмĕр тăршшĕпех савăнчĕ вăл кайран. Унăн куçĕ умĕнчех Тăван çĕр-шыв вăрçă юхăнчăкĕнчен ура çине тăчĕ, ял хуçалăхне çĕнĕ те хăватлă техника килме пуçларĕ, выльăх-чĕрлĕх фермисенче анлă сарайсемпе хăтлă складсем хута кайрĕç, унччен çурлапа çава çеç тытнă хресчен, çĕнĕлĕхсемпе ытлă-çитлĕ усă курса, техникăпа туллинрех хĕç-пăшалланса производствăна çултан-çул ÿстерсе пычĕ. Пурнăç улшăнăвĕн ырă юххинчен епле юлас-ха?

– Вăрçă ачисемшĕн пирĕн вăхăтра малти вырăнта аттесен ятне ямасăр Тăван çĕр-шыва хÿтĕлессиччĕ. Çавăнпах эпĕ те шкул хыççăн салтак атти тăхăниччен малалла вĕренме тăхтарăм. 1964 – 1966 çулсенче Совет çарĕнче хамăн тивĕçе пурнăçланă хыççăн пурнăçри çĕнĕлĕхсемпе, çĕр ĕçĕнчи улшăнусемпе тан пырас тĕллевпех Чăваш ял хуçалăх институчĕн агрономи факультетне вĕренме кĕтĕм. Пурнăçăм ачаран уйхир ĕçне çывăх пулнăранах-тăр, вăй питти яша кĕнекепе туслашса партта хушшинче ларма çăмалах марччĕ. Çапах атте-аннесен ĕçне тата хресчен пурнăçне çăмăллатас-лайăхлатас, ял пурнăçне çĕнĕ варкăш илсе кĕртес тĕллев вĕренÿ çине алă султармарĕ, – тетчĕ мăшăрăм икĕ ывăла аслă пĕлÿ парасси пирки калаçма пуçласан хăйĕн пурнăçне пирĕн ума кăларса, – аса илет тутăр кĕтессипе куççульне шăлса Роза Ивановна.

35 çул вĕрентÿ системинче ĕçлесе ял çыннисем хушшинче ырă ята тивĕçнĕскерпе Кронид Ефимович ял хуçалăх институтне вĕренме кĕрсен 1966 çулта паллашнă та юрату ытамне лекнĕскерсен икĕ çултан çемье чăмăртаннă, ĕçрен пăрăнмасăр вĕсем икĕ ывăл – Сергейпа Андрей – çуратса пурнăç çулĕ çине кăларнă.

Çĕр ĕçне ачалăхранах чунĕпе парăннă Кронид институт хыççăн "Свобода" хуçалăхра вăрлăхпа ĕçлекен агроном пулса вăй хума тытăнать. Хăйĕн ачалăх ĕмĕчĕ патне çывхарнине ăнланатчĕ вăл çав вăхăтра. Ăнланатчĕ те татах тăрăшуллăрах вăй хума çанă тавăратчĕ: кашнин ĕçĕнчен-тăрăшулăхĕнчен колхоз çирĕплĕхĕ килет вĕт! Правур агронома çав вăхăтра хирте те, хранилище-складра та, тракторпа машинăсен паркĕнче те час-часах курма пулатчĕ. Яланах ĕçлекенсем хушшинчеччĕ вăл. Кашнин ыйтăвне, кама мĕн интереслентернине курсапĕлсе тăратчĕ.

**(Малалли пулать.)**

**А. БЕЛОВ.**

Суту-илÿ

# Раççей шайĕнче – малти вырăнта

Çулсеренех Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсем Чăвашпотребсоюз шайĕнче кăна мар, Раççейре те малти вырăнсене тивĕçеççĕ. Çакă вĕсем чăннипех те тухăçлă ĕçлеме пултарнине çирĕплетет.

Майăн 27-мĕшĕнче Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев ячĕпе Чăвашпотребсоюз ертÿçинчен Валерий Павловран саламлă телеграмма çитрĕ. Унта çакна палăртнă. Раççей шайĕнчи Центросоюзăн потребитель кооперацийĕн системинчи 2013 çулхи ĕç-хĕле пĕтĕмлетнĕ май Муркаш райповĕ йăла ыйтăвĕсемпе тивĕçтерессипе 1-мĕш вырăна, ĕç-хĕл эффективлăхне ÿстерессипе 2-мĕш вырăна тивĕçнĕ.

Республика шайĕнче çак системăн кăçалхи пĕрремĕш квартал ĕç-хĕлне пĕтĕмлетнĕ тăрăх асăннă райпо пĕтĕмĕшле ĕç-хĕле йĕркелессипе чи пултарулли пулнă. Мăн Сĕнтĕр райповĕ те тухăçлă ĕçленине палăртмалла, вăл тăватă кăтартупа 1, 2, 3 вырăнсенче.

Потребкоопераци системин аталанăвĕ паянхи кун районта ырă тĕслĕхре. Чи малтанах вара кунта "хиртен – сентре çине" система ăнăçлă ĕçленине асăнмалла. Çакă тавар туянакана пысăк пахалăхлă экологи тĕлĕшĕнчен таса продукципе тивĕçтерме май парать. Ку тăрăхра туса илнĕ продукци апат-çимĕçĕн пĕтĕмĕшле тавар çаврăнăшĕнче 50 – 54 процент йышăнать. Çак енĕпе Ильич ячĕпе тата Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăхсемпе, "Герой", "Свобода" хуçалăхсемпе, "Агро-Ч", "ВаСем" чикĕллĕ яваплăхлă обществăсемпе, çавăн пекех хресчен (фермер) хуçалăхĕсемпе, хушма хуçалăх тытакансемпе тачă çыхăнура ĕçлеççĕ.

Социаллă сферăра потребитель пĕрлĕхĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çак системăра 700 яхăн çын вăй хурать, тивĕçлĕ ĕç укçи илет. 2013 çулшăн икĕ райпо 70 миллиона яхăн налук тата ытти шайри бюджета тĕрлĕ тÿлев куçарнă.

**Р. МАКАРОВА.**

## Объявления

**АУ СПО "Новочебоксарский политехнический техникум"**
**Минобразования Чувашии**
**Лицензия серия РО № 406695**
**Регистрационный № 63 от 06 июня 2012 года**
**Объявляет набор обучающихся на 2014 – 2015 учебный год по программе среднего профессионального образования:**
**На базе 9 классов (срок обучения 3 года 10 месяцев)**

| Специальность | Квалификация |
|---|---|
| **Сварочное производство** | **Техник** |

**По программе подготовки квалифицированных рабочих, служащих:**
**На базе 11-го классов (срок обучения 10 месяцев):**

| Профессия | Квалификация |
|---|---|
| **Сварщик** | **Электрогазосварщик** |

**По программе подготовки квалифицированных рабочих, служащих:**
**На базе 9 классов (срок обучения 2 г. 5 месяцев)**

| № п/п | Профессия | Квалификация |
|---|---|---|
| 1 | **Сварщик** | ***Электрогазосварщик*** |
| 2 | **Автомеханик** | ***Оператор заправочных станций; Водитель автомобиля; Слесарь по ремонту автомобиля*** |
| 3 | **Мастер общестроительных работ** | ***Каменщик; Монтажник по монтажу стальных и железобетонных конструкций*** |
| 4 | **Парикмахер** | ***Парикмахер*** |
| 5 | **Повар, кондитер** | ***Повар; Кондитер*** |

Студенты, обучающиеся по программе подготовки квалифицированных рабочих, служащих, обеспечиваются стипендией, бесплатным двухразовым питанием.

Все студенты обеспечиваются льготными проездными, нуждающиеся – местом в общежитии.

**К заявлению прилагаются следующие документы:**

1. Аттестат (оригинал + ксерокопия)
2. Свидетельство о рождении (2 ксерокопии)
3. Страховой медицинский полис (ксерокопия)
4. Справка о составе семьи (оригинал + ксерокопия)
5. Медицинская справка 086У (печать, заключение)
6. Пенсионное страховое свидетельство (ксерокопия)
7. ИНН (ксерокопия)
8. 6 фотографий 3х4

**Наш адрес: г. Новочебоксарск, ул. Советская, д. 3.**
**Справки по тел.: 73-87-30; 73-86-08.**




**Ĕне, вăкăр, тына, пăрусем туянатпăр.**
**Тел.: 8-987-665-02-13. 5-10.**

* * *

**Продаю трактор МТЗ-80 в отличном рабочем состоянии. Тел.: 8-906-136-12-36.**

* * *

**Проекты зданий и инд. домов, электро-, водо- и газоснабжения, сметы. Свид. СРО. ООО «Инттехс». с. Моргауши, ул. Мира, 9а. Тел.: 62-6-03, 8-937-378-88-28. 2-5.**

* * *

**Продаю: кирпич красный одинарный, полуторный; облицовочный всех цветов; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк; гравмассу; керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352)44-20-97. 9-13.**

* * *

**Ремонт стиральных машин. Быстро. Качественно. Гарантия. Тел.: 8-927-668-58-45. 9-10.**

* * *

**Продаю: гравмассу; щебень гранитный, доломитовый, известковый; керамзит; бетон; торф; песок речной, карьерный. С доставкой. Недорого.**
**Тел.: 8-927-668-70-15. 15-28.**

* * *

**Вăкăр, пăру, сурăх туянатăп.**
**Тел.: 8-905-343-60-63. 8-10.**

* * *

**Продаю песок, гравмассу, щебень, бой кирпича с доставкой. Тел.: 8-905-347-99-15. 5-5.**

* * *

**Продаем квартиры в с. Б. Сундырь по ул. Анисимова от 25000 руб. за кв. м., бесплатно – подвал, автостоянка, предоставляем отсрочку платежей, кредитуем, срок сдачи – 1 сентября 2014 г.**
**Тел.: 8-967-47-000-38. Вадим. 9-10.**

* * *

**Кольца колодцев ж/б (замковые, простые) D-0.7:1.0:1.5, крышки, днища. Бурение индивидуальных колодцев и скважин. Доставка. Тел.: 8-902-327-82-52. 13-21.**

* * *

**Требуются дорожные рабочие. Моргаушский район. Оплата достойная.**
**Тел.: 8-927-669-26-10, 8-937-383-04-60. 3-3.**

* * *

**Услуги мини-экскаватора. Выполняем работы по прокладке коммуникаций, копке фундамента и т. д. Ковши 60 см, 20 см. Ширина экскаватора 1м 50 см, вес 3 т. Цена: 1000 руб/час. Выезд. Тел.: 8-987-660-83-82. 4-8.**

* * *

**Продаю кур, гусят, утят, бройлеров, индюков. Доставка бесплатно. Тел.: 8-909-3000-818. 5-10.**

* * *

**Пластиковые окна и натяжные потолки. Замер и консультация бесплатно. Гарантия качества по разумным ценам. Тел.: 36-09-30, 8-927-668-81-54. 3-11.**

* * *

**Продается двухкомнатная квартира в с. Моргауши. Частично с мебелью. Цена договорная.**
**Тел.: 8-917-675-98-51. 2-3.**

* * *

**Продаю дом в с. Моргауши. Газовое отопление, хозпостройки. Дом в жилом состоянии.**
**Тел.: 8-908-304-99-45, 8-927-855-35-15. 2-2.**

Администрация Моргаушского района объявляет прием заявок на размещение торговых точек в день проведения районного праздника песни, труда и спорта "Акатуй", который состоится 12 июня 2014 года на Ландышской поляне.

Торговые места будут предоставляться на следующих условиях:

1. Осуществление торговой деятельности с торговой палатки, униформа.
2. Праздничное оформление торговой точки.
3. Наличие урны для твердых отходов.
4. Наличие оформленной заявки.

Плата за земельный участок составляет 100 рублей за 1 квадратный метр.

Количество торговых мест ограничено.

Заявки принимаются до 11 июня 2014 года в отделе имущественных и земельных отношений администрации Моргаушского района (кабинет 312, 313) с 8.00 до 17.00 ежедневно, кроме выходных дней. Обеденный перерыв с 12.00 до 13.00 часов, телефон для справок 62-2-66, 62-5-99.

* * *

**ПЕСОК речной, ОПГС (гравмасса), БОЙ КИРПИЧА. Доставка. Тел.: 8-927-667-68-64. 2-10.**

* * *

**Йӳçкассинче сурăх (хура) тата путекки (шурăпа хура) çухалнă. Тел.: 8-909-303-74-56.**

* * *

**Продаю трактор МТЗ-80 1982 года выпуска, косилку роторную 2013 г., грабли-ворошилку 2011 г., козу дойную с козлятами.**
**Тел.: 8-952-021-75-90, 8-927-847-20-55.**

* * *

**В ЗАО «Моргаушский кирпичный завод» требуются работники смежных профессий, оплата сдельно-премиальная, своевременная.**
**Телефон для справок: 62-3-47. Я 1-2.**

* * *

**Аттестат о среднем образовании А № 0989141, выданный в 1996 году Калайкасинской средней школой на имя Николаева Андрея Николаевича, считать недействительным.**

* * *

**Продаю песок, щебень, гравмассу, бой кирпича и т. д. Доставка из с. Моргауши. Недорого.**
**Тел.: 8-905-345-96-62. 1-2.**

* * *

**В молокосборный пункт в с. Б. Сундырь срочно требуются приемщики молока. Тел.: 8-927-847-11-22.**

## Тав тăватпăр

Ярославка ялĕнче пурăннă Александр Егорович Пугачева юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйхăна пирĕнпе пĕрле пайланăшăн тăвансене, ял-йыша, пускилсене, «Сеятель» хуçалăхра пĕрле ĕçленĕ водительсен коллективне тата унта пынă мĕн пур çынна чĕререн тав тăватпăр.

**Ачисем.**

Оринин ял тăрăхĕнчи Тереç ялĕнче пурăннă, «Восток» хуçалăхра тĕрлĕ ĕçре нумай çул ĕçленĕ пирĕн аннене, хунямана, кукамая, асаннене, тăхлачăна Зинаида Михайловна Орловăна юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн «Восток» хуçалăх ĕçченĕсене, тăвансене, юлташĕсене, кӳршĕсене, унта пынă мĕн пур çынна чĕререн тав тăватпăр.

**5 ывăлĕ, 6 хĕрĕ, 2 кинĕ, 5 кĕрĕвĕ, 14 мăнукĕ, çывăх юлташĕ, хăти-тăхлачисем.**

## Отчет

УТВЕРЖДЕН
протоколом заседания Наблюдательного совета автономного учреждения Чувашской Республики «Редакция Моргаушской районной газеты «□□нтер□ялав□» («Знамя победы») Министерства информационной политики и массовых коммуникаций Чувашской Республики от 28 февраля 2014 года N 1

**Отчет**
**о результатах деятельности автономного учреждения Чувашской Республики «Редакция Моргаушской райгазеты «□□нтер□ялав□» («Знамя победы») Мининформполитики Чувашии и об использовании закрепленного за ним государственного имущества за 2013 год**

**Раздел 1. Общие сведения об учреждении**

| | | |
|---|---|---|
| 1.1 | Полное официальное наименование учреждения | Автономное учреждение Чувашской Республики «Редакция Моргаушской районной газеты «□□нтер□ ялав□» («Знамя победы») Министерства информационной политики и массовых коммуникаций Чувашской Республики |
| 1.2 | Сокращенное наименование учреждения | АУ «Редакция Моргаушской районной газеты «□□нтер□ялав□» («Знамя победы») Мининформполитики Чувашии |
| 1.3 | Дата государственной регистрации | 31.08.2012 |
| 1.4 | ОГРН | 1072136000639 |
| 1.5 | ИНН/КПП | 2112390313/211201001 |
| 1.6 | Регистрирующий орган | ФНС №6 по ЧР |
| 1.7 | Код по ОКПО | 540725272 |
| 1.8 | Код по ОКВЭД | 22.12 |
| 1.9 | Основные виды деятельности | Издание газеты |
| 1.10 | Иные виды деятельности, не являющиеся основными | нет |
